«Халăх тăрăшнипе, патшалăх пулăшнипе»

# Тăван енри хăтлă пурнăç – пĕрлехи тĕллев





***Паянхи пурнăçра тăван тавралăх илемĕ пирки тĕрлĕ шайра хĕрӳ калаçусем иртеççĕ, ыррине шантарса пысăк йышăнусем тăваççĕ. Кунпа пĕрлех вырăнсенче те тирпейлĕрех пулма тата тăван ене хăт кĕртме укçа-тенкĕ чылай уйăраççĕ. Ку лайăх, анчах çаксем хыçĕнче конкретлă ĕç пулмасан пĕрлехи ĕмĕт те хамăр кĕтнĕ пек туллин пурнăçланаймасть.***

***Маларах каланине шута илсен, пуçарулăх бюджечĕ халĕ ялти хăтлă пурнăçăн никĕсĕ пулса тăчĕ. Çакă паян ялсен аталанăвĕн малашлăхĕ пулнине юлашки çулсенче тĕрлĕ шайри ертӳçĕпе пĕрлех вырăнта пурăнакансем те лайăх ăнланса илчĕç. Çавăнпа та ял çыннисем çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртме пурте пĕр çын пек çанă тавăрса ĕçе кӳлĕннине паян ырламалли кăна юлать.***

Çӳлерех каланине хăйĕн калаçăвĕнче **Ярапайкасси территори пайĕн пуçлăхĕ** те тулли кăмăлпа çирĕплетрĕ. Хамăрăн калаçура Олимпиада Михайловна ялсенче пурăнакан пуçаруллă çынсем, вырăнти активистсем пурнăç ыйтнипе тан пыма тăрăшнине çирĕплетрĕ. Кунта хамăр вулавçăсене **Олимпиада ВЕСЕЛОВА** каласа панипе паллаштарсан та ытлашши пулас çук тесе шутлатăп.

– Пирĕн территори пайĕнче тăван ене юратакансем, ăна малалла çирĕп аталантарма тата ыттисенчен хитререх те тирпейлĕрех пулма тăрăшакансем пурăнаççĕ. Хăйсен ĕмĕчĕсене вĕсем хамăр территори пайĕнчи 16 ялта та кулленхи ĕçĕсемпе пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшнине эпĕ куллен курса тăратăп. Хăйсем тĕллевлĕ ĕçленипе пĕрлех ыттисене те унта активлăрах явăçтарма тăрăшнипе палăрса тăраççĕ вĕсем. «Пĕччен сурсан типсех пырать, халăх сурать – кӳлĕ пулать», – тесе ваттисем каланине хăйсен кулленхи тăрăшуллă ĕçĕпе пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çапла вара территори пайĕнчи ялсенче пурăнакансем тăван тавралăха тата хăйсем пурăнакан вырăна тирпей-илем кĕртессипе юлашки çулсенче тăтăшах пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Çакă ялта пурăнакансен пурнăç тата ĕç культурине ӳстерессипе çыхăнни паян никамшăн та вăрттăнлăх мар, – каласа парать территори пайĕн пуçлăхĕ. Ку тăрăхри ялсемпе иртсен территорире яланах санитари тасалăхĕ хуçалантăр тесе вырăнсенче йăлари çӳп-çапа вăхăтра пуçтарассине тĕп вырăнта тытма тăрăшни куç умне пулать.

Вăл е ку территорие тирпейлĕ пăхса тăрассин шутне вырăнсенчи пĕчĕк архитектура палăкĕсем, хăт кĕртекен йывăç-тĕм, çуркуннерен хура кĕрччен хăйсен илемĕпе савăнтаракан чечек йăранĕсемпе пуян пахчасем, тирпейлĕ çул-йĕр, ларса канмалли саксем, çирĕплетсе панă çĕр лаптăкĕсенче санитари тасалăхне тытса тăни, калаçу ирттермелли тата канмалли вырăнсем йĕркелени, ĕç вырăнĕсене тирпейлĕ тытса тăни кĕреççĕ. Ялсенче пухăнакан йăлари çӳп-çапа уйăхсерен полигона турттарса тăма тăрăшни те – юлашки çулсенче пурнăçа кĕнĕ ырă пулăм. Ял çыннисем çакăншăн вăхăтра тӳлесе тăни ĕç пахалăхĕ çине ырă витĕм кӳрет. Тирпей-илем конкурсĕ валли йĕркеленĕ ятарлă комисси вара çуллен вырăнсенчи тасалăхпа хăтлăха пăхса тухса çирĕп хак парать. Унăн пĕтĕмлетĕвĕпе, вăхăт çитсен, çĕнтерӳçĕсене тата тирпей-илемшĕн лайăх тăрăшнисене палăртассине Ярапайкасси территори пайĕнче паян та кун йĕркинчен кăларман-ха. Калаçу ку тĕле çитсен территори пайĕн пуçлăхĕ вырăнта пурăнакансен тăрăшулăхне малти вырăна кăларчĕ:

– Ял çыннисем пĕр тĕллевпе тăрăшмасан, вĕсем пире кулленхи ĕçре пулăшса пымасан, хăйсен ырă пуçарăвĕсене çамрăксене вĕрентмесен, эпир çавăн пек калăпăшлă ĕçсене кĕске вăхăтра пурнăçлама пултараймастпăрах тесе шутлатăп. Тавах ялта пурăнакансене, вырăнти пуçаруллă çынсене алă усса ларманшăн. Пĕрле пулсан çеç эпир пысăк вăй пулнине хамăр ĕçрен куратпăр, – терĕ Олимпиада Михайловна калаçăва территори пайĕнчи кăçалхи проектсем çине куçарнă май. Ярапайкассисемпе шурчасен тата ку тăрăхри ытти ялта пурăнакансен кăçал хăйсен территорийĕнче 5 проекта пурнăçа кĕртмелле. Вĕсен пурин те смета хакĕсем паллă, ĕç пурнăçлаканĕсем пур, укçи-тенкине пăхса хăварнă. Çапла вара паян пуçарулăх программипе кăçал пурнăçланакан проектсемпе округри подрядчиксем ĕçе кӳлĕннĕ те ĕнтĕ. Территори пайĕнче те, ялсенче пурăнакансем те палăртнă ĕçсем вăхăтра тата пахалăхлă пурнăçланасса шанаççĕ. Çĕнĕ объектсем ялсен сăн-сăпатне хăт кĕртесси пирки ку тăрăхра пурăнакансен паян никамăн та иккĕленӳ çук.

– Пуçарулăх бюджечĕпе кӳлĕннĕ объектсенчи ĕçсем еплерех пыраççĕ? Вĕсем палăртнă вăхăтра пурнăçланмасăр юлас хăрушлăх çук-и? – кăсăкланатăп малалла.

– Кашни объектах халăхпа канашласа, çиччĕ виçсе пăхса кӳлĕнтĕмĕр. Пур объекта пурнăçласа хута кĕртме те ял çыннисем вуншар процент хăйсен укçине хыврĕç. Çакă пурăна киле асăннă объектсемпе ял çыннисем перекетлĕ усă курасса шанма май парать. Çавăнпа та йышăннă объектсем пурнăçланмасăр пите хĕретесси пулмастех тесе шутлатăп. Акă паянхи куна **Ярапайкассинчи Молодежная урамри спорт площадкине** йĕркелесе çитертĕмĕр. Ăна пурнăçлама 1 миллион та 220 пин тенкĕ (122 пин тенки – ял çыннисен) тăкакларăмăр. Кунта «Романа» чикĕллĕ яваплăхлă общество (ертӳçи Н. Николаев) тухăçлă ĕçлерĕ. Ĕç вĕçленнĕ иккĕмĕш объект вăл – **Шурчара пушар машини валли шыв илмелли вырăн.** 1 миллион та 900 пин ытла тенкĕ тăракан ĕçе А. Егоров ИП строителĕсем пурнăçларĕç. Хăрушсăрлăх тĕп вырăнта пулнине шута илсе ку объекта хута яма ял çыннисем те активлă хутшăнчĕç. Кĕске вăхăтрах вĕсем строительство валли 190 пин ытла тенкĕ пуçтарса пурнăçламалли ĕç хăвăртлăхне ӳстерчĕç.

Тепĕр 3 объектра та паян уяр кунсен кашни сехечĕпе туллин усă курса хĕрӳ ĕç шавĕ тăрать. **Иштерек ялĕнчи пĕвене тасатассипе** «Кермен» предприяти (ертӳçи – А. Родионов) вăй хурать, йышăннă ĕçсене вăхăтра пурнăçлассипе тăрăшать. Ку ĕçĕн хакĕ 8 миллион та 42 пин тенкĕ ытла пулнине кура ĕç хăвăртлăхне тивĕçлĕ шайра тытма ял çыннисем 842 пин тенкĕ ытла укçа пуçтарса пачĕç. Çак ялтах пуçарулăх бюджечĕпе пурнăçланакан тепĕр проект вăл – **пĕве патĕнчи территорие тирпейлесе хăт кĕртесси.** Ăна валли проектпа 4 миллион та 211 пин тенкĕ кирлĕ пулсан, ял çыннисем ĕçсене тивĕçлĕ шайра пурнăçласа пыма кĕске вăхăтра хăйсен тӳпине 421 пин тенкĕ ытла хыврĕç. Кунти ĕçсене пурнăçлаканĕ – А. Егоров ертсе пыракан ИП. Пиллĕкмĕш объект вăл – **Вускасси ялĕнчи урама вак чул сарса хытарасси.** Ăна пурнăçлассипе Р. Селеев ертсе пыракан «Гудвилл» чикĕллĕ яваплăхлă общество ĕçлет. Ку проектăн хакĕ – 1 миллион та 21 пин тенкĕ ытларах. Хăйсене урамра тикĕс те паха çул кирлĕ тесе ял çыннисем пуçарулăх бюджечĕпе ĕçлеме 102 пин тенкĕ пухрĕç те ĕнтĕ. Вырăна строительство материалĕсем çителĕклĕ кӳрсе килнĕ, ĕçлемелли хăватлă техника пур. Строительсем кунти ĕçе çурла уйăхĕ вĕçлениччен пĕтерес шутлă. Каласа хăвармалла, пур организаци те паян çу кунĕсемпе туллин усă курса юлассишĕн тăрăшать. Вĕсем хăйсем йышăннă ĕçсене вăхăтра вĕçлессе ялсенче пурăнакансем те шанаççĕ, май пур таран вĕсене пулăшма та тăрăшаççĕ.

Ярапайкасси территори пайĕ паян хăйсем патĕнче ĕçлекен строительство организацийĕсен ĕçне самантлăха та куçран вĕçертмест. Вĕсенчен ял пурнăçĕ малалла аталанасси нумай килнине вырăнти пур специалист та ăнланать. Çынсем харпăр хăй пурăнакан вырăнти тирпей-илемшĕн тăрăшнине ырă ен тесе хаклатăп. Ялсенче ку ыйтăва самантлăха та кун йĕркинчен кăлармаççĕ, Чăваш Республикин пуçлăхĕсем те, муниципалитет округĕ те ку ыйту çине яланах пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Çакна ялсенче пурăнакансем те тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тăвасса, хăйсен пурнăçĕнче тирпейлĕх ыйтăвне малти вырăна кăларасса, çамрăк ăруран та ку тĕлĕшпе çирĕп ыйтасса шанас килет. Пĕрле пĕр тĕллевпе ĕçлесен çеç пурнăçăн çĕнĕ шайне çĕкленме пултарăпăр, хамăрăн пулас ăрушăн ырă тĕслĕх пулса юлăпăр.

**Анатолий ПЕТРОВ.**

**Проект Чăваш Ен Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**

